ĂСТАЛĂХ

# Тĕрĕ – чун киленĕçĕ



**Шупашкар районĕнчи Хурăнлăх ялĕнче пурăнакан Людмила Иванова – çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх. Мĕншĕн тетĕр-и? Вăл тĕрлеме юратать. Людмила Васильевна уйрăмах чăваш тĕррине кăмăллать. Çак ĕçе вăл хăйĕн хĕрĕсене Маринăпа Ленăна та хăнăхтарнă.**

Людмила Иванова пĕр предприятире 10 çул алă вĕççĕн тĕрленĕ. Вăл пĕчĕк чухнех тĕрлеме юратнă, унăн вăрттăнлăхĕсемпе ăна амăшĕ Нина Семеновна паллаштарнă.

– Пĕчĕк чухне алла йĕппе çип тытнине ас тăватăп-ха. Ун чухне чылайăшĕ тĕрлетчĕ, çынсене кура эпĕ çак ĕçе вĕренме талпăнтăм. Çавăнтанпа тĕрĕ маншăн чун киленĕçĕ. Предприятире ĕçленĕ чухне чăваш тĕррин эрешĕсен ячĕсене пĕлеттĕм, ятарлă тетраде çырса та хунăччĕ. Халĕ манăçа тухать. Акă «ухмах тĕрĕ», вăл икĕ енчен те пĕр пек пулать, – ĕçĕсемпе паллаштарнă май каласа кăтартрĕ Людмила Иванова. Вăл çынсем ыйтнипе миçе кĕпе тĕрлемен-ши? Шучĕ те çук. Хăйĕн валли те илемлĕ тум янтăланă. Кĕпи унăн амăшĕ çĕленискерех. Людмила Иванова ăна тĕрлесе хитрелетнĕ çеç. Ку тума вăл туя кайма тăхăнать. Пĕр-пĕр уяв йĕркеленет-и – пĕлĕшĕсем Людмила Васильевна патне тĕрĕллĕ кĕпе ыйтма пыраççĕ.

Тĕрлесси – ансат ĕç мар. Людмила Иванова предприятире вăй хунă чухне панă ĕçе вăхăтра тума тăрăшнă.

– Ытларах кĕпе умĕсем тĕрлеттеретчĕç. Пусма çинчи кашни шăтăка шутламаллаччĕ, унсăрăн эреш пĕр пек пулмĕ. Пĕрре йăнăшсан пĕтĕм ĕç харама каять. Тĕрĕ куç çивĕчлĕхне самаях чакарчĕ, апла пулин те çак ĕç мана халĕ те килĕшет, – терĕ ăста. Ĕлĕк качча каякан хĕрсем хăйсем валли тупра хатĕрленĕ. Хăш-пĕр тăрăхра çак йăла халĕ те манăçа тухман. Людмила Иванова та çемьеленме хатĕрленекен хĕрсем ыйтнипе сахал мар тупра тĕрленĕ. Хăйĕн хĕрĕ Лена валли вара «мул» пухса ĕлкĕреймен – вăл 19 çулта качча тухнă. Çапла çав, ашшĕ-амăшĕ ывăлĕ-хĕрĕ çитĕннине сиссе те ĕлкĕреймест.

Людмила Ивановăн ĕçĕсене курава та илсе кайнă. Маттур хĕрарăм хисеп хучĕсене те тивĕçнĕ. Вăл хăйĕн ĕçне чунран юратать.

– Предприятире ĕçленĕ чухне кашни эреше пĕр папкăна пухрăм. Вăл халĕ те упранать – çăкăр ыйтмасть-çке. Пурăна киле кирлĕ пулатех, – калаçăва вĕçлерĕ Людмила Иванова.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Гороскоп

## Кăрлач, 13-19



**Сурăх.** Кайран ÿкĕнмелли ĕçсем тăвасран сыхланăр. Ахăртнех, вăрттăнлăхăрсем пирки ыттисем те пĕлĕç. Хăвăра алăра тытăр – кирлĕ-кирлĕ мар сăмах хушса япăх лару-тăрăва кĕрсе ÿкес хăрушлăх пур. Ку яхăнта мĕн-мĕн тумаллине хут çинех çырăр, пуçри манăçма пултарать. Шăмат кун кирек мĕнре те виçене пăхăнăр: сăмахран, тăварлă ан çийĕр.



**Вăкăр.** Хатĕрленĕр! Питĕ ăнăçлă эрне. Палăртни пурнăçланĕ, кĕсьене укçа кĕрĕ, савăнăçлă тĕл пулусене хутшăнатăр... Юн кун мĕн те пулин сĕнеççĕ-и? Ăна йышăнмасан пысăк йăнăш тăватăр. Пултарулăх тытăмĕнче ĕçлекенсен кĕçнерни кун питĕ пысăк çитĕнÿ тумашкăн шанăç пур.



**Йĕкĕреш.** Çăлтăрсем савни пур яшсене хĕре ылтăн çĕрĕ парнелеме, качча тухмашкăн ыйтма сĕнеççĕ. Йĕкĕрешсен ку эрнере мĕн пултарнине ĕçре туллин кăтартмалла, хăйсен шухăшне ыттисене ĕнентерме пĕлмелле. Тунти кун тÿре-шара патне ан кайăр – ĕç ăнмĕ, юн кун вара илнĕ кивçене парса татма ыйтĕç. Кĕçнерни кун халăх йышлă çÿрекен вырăнтан пăрăнăр.



**Рак.** Ку тапхăрта сирĕн хăвăрпа килĕшмен ĕçтешĕрсене те ÿкĕте кĕртме май пур. Мĕнле майпа тетĕр-и? Шухăшăра уççăн палăртăр, именсе-вăтанса ан тăрăр. Савнă çыннăрпа харкашнăччĕ-и? Эрне пуçламăшĕнчех унпа пĕр чĕлхе тупма тăрăшăр – пĕрремĕш утăма сирĕн тумалла. Тунти кун çĕнĕ ĕç сĕнсен те тĕплĕ шухăшламасăр татăклă хурав ан парăр.



**Арăслан.** Суя хыпара ĕненсе киревсĕр ĕçсем тăвасран сыхланăр. Унсăр пуçне çемьесĕррисем иккĕленĕç: вĕсем ку çынна чăнахах юратаççĕ-ши е ку хăнăху кăна-ши? Документсене тĕплĕ вуламасăр /икĕ хут пăхса тухни те ытлашши пулмĕ/ алă ан пусăр. Тунти кун мĕн тумаллине манасран ĕмĕтĕр пирки кун кĕнекинех çырăр. Юн кун ĕçлĕ çул çÿреве тухмалла пулĕ.



**Хĕр.** Кирек мĕнле ĕçе пуçăнсан та чи малтан чунăр ыйтнă пек тăвăр. Пултарулăх енĕпе ĕçлекенсен пуçне ырă чылай шухăш кĕрĕ, вĕсене пĕр тăхтаса тăмасăр пурнăça кĕртме тытăнăр. Тунти кун ĕçлĕ тĕл пулăва хутшăнмалла-и? Сăлтав тупса ăна урăх куна куçарăр. Шăмат кун вара, ахăртнех, ăшă кăмăллă çынпа паллашатăр.



**Тараса.** Ĕçре пĕр харăсах кăмăла çĕклекен темиçе хыпар илтетĕр, шăпах çакă пуç çĕклемесĕр ĕçлеме хĕтĕртĕ. Унсăр пуçне çемье бюджетне пуянлатмашкăн лайăх меслет тупăнĕ. Тунти кун çăлтăрсем укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтусене татса пама сĕнеççĕ. Кĕçнерни кун кил валли мĕн те пулин туянăр – вăл чылай вăхăт усă кÿрĕ.



**Скорпион.** Унчченхи тĕллевĕрсене пурнăça кĕртмелли тапхăр. Шăпах çак кунсенче пуçлăхăр сирĕн пирки шухăшлĕ: карьера картлашкипе хăпартмалла-и е нимĕн те улăштармалла мар-и? Апла тăк ĕçре пуçаруллăрах пулăр, хăвăр çине ытлашши тивĕç илме ан вăтанăр. Шăмат кун кил-тĕрĕшре тирпейлĕр.



**Ухăçă.** Кирек мĕнле ĕçе пуçăнас умĕн те тĕплĕ тишкерÿирттерĕр, çакăн хыççăн кăна çанă тавăрма пултаратăр. Унсăр пуçне çăлтăрсем пахалăхсăр апат çисе наркăмăшланас хăрушлăх пуррине систереççĕ – асăрханăр. Сире тунти кун каçăхса кайсах мухтаççĕ-и? Апла тăк ытлари кун ятламалли, тиркемелли сăлтав та тупаççех. Вырсарни кун çĕнĕ юлташсемпе çывăхланатăр.



**Ту качаки.** Ĕçре савăнмалли сăлтав самаях пулĕ. Бизнесменсем укçа çумăрĕ айĕнче тăраççĕ тейĕн – мĕн пур ĕç ăнать. Çапах çăлтăрсем Ту качакисене тимлĕрех пулма сĕнеççĕ: суя хыпар сире тĕрĕс çултан пăрĕ. Тунти кун сирĕн ĕçпе усă курма хăтланĕç – ирĕк ан парăр.



**Шыв тăкан.** Хăлхапа кăна илтнине, куçпа пачах курманнине, ан ĕненĕр. Лавккара тавар хакне чакарнă, банка пысăк процентпа укçа хума май пур тенине ăса ан хывăр. Тунти кун нимĕнле ыйтăва та ан хуравлăр. Ытлари кун бизнесменсемшĕн ăнăçлă пулĕ – тупăш кÿрекен килĕшÿ тума шанăç пур.



**Пулăсем.** Мĕн пур вăй-хала ĕç çине ярăр, çавăн чухне кăна укçа-тенкĕ ытларах пухма пултаратăр. Пулăшу кирлĕ тĕк специалистсемпе канашлама ан вăтанăр – кăткăс ыйтăва хăвăр тĕллĕнех хуравлама хăтланни вырăнсăр. Кĕçнерни кун мăшăрăрпа /савнийĕрпе/, ĕçтешĕрсемпе урлă пулас килмесен çăвара шыв сыпăр.

◆ ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ!

# Ĕне пирки

- **Ĕнесем Çĕр планетăн магнит сийне туяççĕ.**
- **Майракаллă шултра çак выльăхăн сăмсин ÿчĕ çинче этем аллинчи пекех йĕрсем пур. Çыннăн пÿрнин йĕрĕсем пекех ĕнесен те вĕсем кашнин хăйне евĕр. АПШн пĕр штатĕнче выльăх вăррине тытнă чухне çакăнпа усă кураççĕ.**
- **Ĕлĕк чылай халăх пысăк япала хакне ĕнепе виçнĕ.**
- **Ĕне макăрма пĕлет.**
- **Америкăн унчченхи президенчĕн Джордж Бушăн хăйне ятăн ĕне те пулнă. Ăна Офелия тесе чĕннĕ.**
- **Ĕне – ăслă выльăх. Кĕтÿри пĕр ĕнене карта çумне перĕннипе ток çапсан ыттисем çак йăнăша тумаççĕ.**
- **Ĕне-вăкăр туслăха çулласа палăртать.**
- **Тĕнчери чи йывăр ĕне 2 тонна та 270 килограмм тайнă. Темиçе ăрата пĕрлештернинчен çуралнăскере 1906-1910 çулсенче тараса çине тăратнă. Рекордсен Гиннесс кĕнекинче палăртнă тăрăх – çак ĕне ытамласа илсен 3 метр та 96 сантиметр пулнă.**


РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

## ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без выходных. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные от производителя – недорого; **цемент.** Доставка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** – диам. 1,5м; 1м; 0,7м; 0,8м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 8-927-667-95-88.

**110.ОКНА** пластиковые, стальные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89278404225.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ** – пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**181.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**227.Пластиковые ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 89875754704.

**250.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**874.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.


## 2013 çулхи раштавăн 27-мĕшĕнчи номерти сканворд хуравĕсем

*СЫЛТĂМАЛЛА: Гагарин – Колумби – Путин – Айрат – ентеш – Елза – милĕк – нарăс – Раштав – спам – Андрей – мент – Рязань – Илпек – мăрье – Наврус – ватник – асатте – Сĕвене – Тутта – Гарри – Хĕл – кĕлĕ – сленг – Ивана – Кирибат.*

*АЯЛАЛЛА: Гиннесс – Наташа – кĕтрет – Лаптева – “Брида” – Вьетнам – Иран – Ермаков – Задорнов – Майя – лаша – конь – Папис – Ереван – ёлка – Тигр – “Зона” – нарт – Мексика – Нурăс – витре – Устюг – Англи – нарта – “Север” – Египт – паха – евĕк.*

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 10.01 | 0 | 0 |
| 11.01 | + 1 | 0 |
| 12.01 | - 4 | - 1 |
| 13.01 | - 6 | -12 |
| 14.01 | - 12 | -15 |
| 15.01 | - 16 | -23 |
| 16.01 | - 14 | -15 |

# Юратупа

ЧУНРИ

## Мухтар хăйĕн хуçипе явăçтарчĕ

Юр пĕрчисем вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе анаççĕ. Хĕвел çинче вĕсем тĕлĕнмелле хитре йăлтăртатаççĕ. Юратсан тĕнче илемлĕ теççĕ. Тĕрĕсех иккен.

Ĕçре пурте тенĕ пекех Çĕнĕ çула ăçта тата кампа кĕтсе илессине сӳтсе явнă чухне кăмăлсăррăн лартăм. Ăна мĕнле кĕтсе илесси пур пĕрех мар-им? Кашни çул пĕрешкел. Лавккасем искусственнăй чăрăшсемпе, йăлтăрккасемпе тулаççĕ. Пур çĕрте те пылак кучченеçпе тетте сутаççĕ. Эпĕ чурăс чунлă тесе ан шухăшлăр. Уява кĕтетĕп, сехет вун иккĕ шакканă чухне черкке çĕклетĕп, тăвансене саламлатăп, салют курма тухатăп... Анчах 2014 çул умĕн кăмăл пăсăлчĕ. Ăна кампа кĕтсе илес? Аттепе аннене темиçе çул каялла юлашки çула ăсатрăм, пиччепе аппа ют çĕр-шывсенче тĕпленчĕç, тус-юлташ çемьеленчĕ. Шанчăклă тусăм Артем кăçал авланчĕ. Çĕлен çулĕ çитнине унпа çав тери хаваслă паллă тунăччĕ. Халĕ те асрах...

– Илюша, эпир сан патна пĕр ĕçпе... – шухăш çăмхине Марина сасси татрĕ. Çамрăках мар хĕрарăм виçĕ ачана пĕччен ура çине тăратать. Хайхискер упăшки еркĕнпе тарсан пуç усмарĕ, малаллах талпăнчĕ. Çавăн хыççăн та вăл арçынсене ӳпкелешнине илтмерĕм. Тен, çавăнпах уçă кăмăллăскере ытти ĕçтешрен ытларах хисеплетĕп, май килнĕ чухне пулăшма тăрăшатăп. – Илюша, Çĕнĕ çул каçхине мĕн тăватăн? Пире Хĕл Мучи кирлĕ...

Эпĕ район администрацийĕнче ĕçлетĕп. Уйрăмра 6 хĕрарăм та эпĕ – пĕр арçын. Пурте ачапăчаллă. Хайхискерсем Çĕнĕ çул каçхине мана шур сухал тумне тăхăнтартасшăн та килĕрен шăпăрлансене саламласа çӳреттересшĕн.

– Илюша, хăвах пĕлетĕн: ачасем Хĕл Мучине ĕненеççĕ, ăна кĕтеççĕ. Парнесене маларах хатĕрлесе хурăпăр. Санăн пĕчĕкскерсене саламламалла. Тархасшăн... Эсĕ пирĕн пĕртен пĕр çăлăнăç, – йăлăнса тинкерчĕ Валентина.

– Пĕлтĕр упăшкăрсенчен пĕри çӳременччĕ-им? – аса илтĕм иртнине.

– Эх, Илюша, ачасем çулран-çул ăсланса пыраççĕ. Пĕлтĕр вĕсем Ольга Ивановнăн упăшкине палларĕç, – ассăн сывларĕ Марина. – Асли пĕр эрне манпа калаçмарĕ.

Йăлăнса ыйтакансене хирĕçлеймерĕм. Мана малалла мĕн кĕтессине маларах пĕлинччĕ...

Раштавăн 30-мĕшĕнче ĕçтешĕмсем кĕрĕк, кăçатă, сухал, пысăк хĕрлĕ михĕ тупса пачĕç. Çĕнĕ çул юррисене çĕрĕпе вĕрентĕм, ĕçтешĕмсен тĕпренчĕкĕсен ячĕсене ас туса юлма тăрăшрăм. Чăтаймарăм – парнесене уçса пăхрăм. Телефон, электрон кĕнеке, вăйă дискĕсем, коньки... Пĕчĕк чухне Хĕл Мучи чăрăш айне шахмат хăми хурса хăварнăччĕ. Савăннипе путек пек тăрст-тăрст! сиккелерĕм. Кунашкал парнесем пирки ĕмĕтленме пултарайман. Çамрăк ăрăвăн кăмăлне тултарма йывăр иккен.

31-мĕшĕнче кӳршĕсем сĕтел тавра кускаланă вăхăтра йывăр михе çурăм хыçне çакрăм та тухса утрăм. Пĕрремĕш пункт – Валентинăн хваттерĕ. Малалла мĕн пулса иртнине аса илес килмест. Алăкран шаккарăм çеç – вăл яри уçăлчĕ. Ачасем шурă сухаллă мучие чăтăмсăррăн кĕтнĕ иккен. Шăпăрлансем ман тавра сиккелерĕç, кăшкăрашрĕç, çине-çине ыйту пачĕç, пĕрпĕрне пӳле-пӳле сăвă каларĕç. Тĕрĕссипе, пилĕк минутранах тухса тарас килчĕ. Çитменнине, çурăм тăрăх тар юхрĕ. Кĕçĕннинчен пĕр курка сивĕ шыв ыйтрăм.

– Ме, Хĕл Мучи, сан валли ятарласа хатĕрлерĕм, – терĕ тăвата çулти хĕр ача пăр катăкĕ тыттарнă май. Вĕсем чăрăш тавра çаврăннă вăхăтра пăр катăртаттарса лартăм. Урама туххсанах юр катрамĕ çине тăсăлса выртрăм. Хĕл Мучи тумне тăхăнма килĕшнĕшĕн ӳкĕнтĕм пулин те миххе малалла сĕтĕртĕм.

Ĕçре Ольга Ивановнăн ачисем пирки пĕрре мар илтме тӳр килнĕччĕ. Амăшĕ час-часах ывăлĕ чăрсăр та куштан ӳснĕшĕн ӳпкелешетчĕ. Акă манăн Денисспа паллашма вăхăт çитрĕ.

– Эпĕ санран урăххине ыйтнăччĕ! – урараан тапрĕ арçын ача. Çав тери ыратнăран куçран куççуль тухрĕ. Хирĕç тавăрăттăм – асамçă пулнине аса илтĕм. Дениса кĕтесе тăратрăм, малашне те çакăн пек хăтлансан çитес çул парнесĕр хăварăп терĕм. Аслине лăплантартăм çеç – кĕçĕнни мăйран уртăнчĕ те сухалран туртрĕ.

– Эсĕ чăн-чăн асамçă пулсан фокус кăтарт! – çухăрчĕ ача.

– Тимлĕ săна, – терĕм те Денисăн хăлхи хыçĕнчен канфет кăлартăм. Ачасем савăнса сикме пуçларĕç.

– Тепре кăтарт! – кăшкăрашрĕç чарусăрскерсем. Кĕсьере канфет чылайччĕ те... çур сехет фокус кăтартрăм.

Хĕл Мучи пуласси парне валеçесси мар иккен. Юрласа ташланисĕр пуçне ачасен вăрттăнлăхĕсене те итлеме тиврĕ. Карина сăмахĕсем халĕ те хăлхара янăраççĕ.

– Атте эрех сыпсан аннепе харкашма пуçлать. Пĕррехинче ӳсĕрскер ăна питĕнчен çупрĕ, çӳçĕнчен туртрĕ. Анне никама та калама хушмарĕ. Хĕл Мучи, аттене эрех ĕçме чарсам. Текех эпĕ санран нимĕн те ыйтмăп. Тупа тăватăп, – чĕвĕлтетрĕ хĕр пĕрчи. Уяв сĕтелĕ çинче шурă эрех кĕленчи пурччĕ.

– Ку Çĕнĕ çулта ытлашши пулĕ, – терĕм арçынна Карина курман чухне. Кĕленчене миххе ывăтрăм. Ача ашшĕ аптăранăран нимĕн калама та ĕлкĕреймерĕ.

Юлашки пӳрт патне çывхариччен вун пĕр сехет иртрĕ. Ывăнтăм пулин те кăмăлăм уçăлчĕ. Ăнсăртран темĕскер урараан ӳкерчĕ, туллама пуçларĕ.

– Мухтар! Мухтар! Чарăн! – илтĕнчĕ хĕр сасси. – Хĕл Мучи, каçар, тархасшăн.

Путек пысăкăш йытă хамлатма пуçларĕ. Пике тăма пулăшрĕ те ахăлтатса кулчĕ. Тăвата уралăскер купарча, чĕр куççи тĕлĕнчен шăлавара çурнă! Мĕн тери намăс!

– Нимех те мар, кĕрĕкпе хуплансан курăнмĕ, – терĕ сарă хĕр. – Хирĕçлемесен çĕлесе парăп!

Сехет пĕр чарăнми малалла шăвать. Маринăн виçĕ ачине парнесĕр хăварас килмест. Анчах тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ, илемлĕ сăн-питлĕ пикепе те çывăхрах паллашас килет. Çук, çак каç эпĕ Хĕл Мучи!

– Юрĕ ĕнтĕ, Çĕнĕ çулпа саламлатăп сире, – мăкăртатрăм та çаврăнса утрăм. Маринăн тĕпренчĕкĕсем мана кĕтсе ывăннă. Лара-тăра пĕлменскерсем чăрăш тавра юрласа çаврăнчĕç, ташларĕç, вĕсемпе Çĕнĕ çул кĕтсе илме ӳкĕтлерĕç.

– Чăнах та, Хĕл Мучи, юлсам, – терĕ кил хуçи.

– Эпир сана икĕ сыпăкри аппапа паллаштарăпăр. Вăл питĕ ырă, – чĕвĕлтетрĕ виççĕри Катюша. Алăк чĕриклетрĕ.

– Акă çитрĕ те пирĕн Юр Пике! – пĕлтерчĕ Марина. Пӳрте йытă хуçи кĕрсе тăчĕ. Ăна курсанах йăл култăм. – Инна, парнесĕр юлатăн вĕт!

2014 çула сарă пикепе юнашар кĕтсе илтĕм. Сехет вун иккĕ шакканă чухне Хĕл Мучине тав турăм. Ара, пĕлтĕр ырă кăмăллă хĕрпе паллаштарма ыйтнăччĕ те. Ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ. Манăн та Çĕнĕ çула çемьепе кĕтсе илес килет. Хĕвел тухăç календарĕпе килĕшӳллĕн Лаша хуçаланма пуçласанах ЗАГСа çул тытăпăр. Савнийĕм качча тухма хирĕç мар. Мухтарпа çеç пĕр чĕлхе тупмалла. Хуçа валли савни тупнăскер текех мана тапăнмасса шанатăп.

**ИЛЬЯ.**
Элĕк районĕ.

ЮРАТУ ГОРОСКОПĔ



**2014 çул – Лаша çулталăкĕ. Çак чĕр чун çулĕнче çуралнисем чун савнишĕн тем тума та хатĕр. Чылай чухне хăйсен туйăмне савăшура мар, ăнланупа, хуçалăх ĕçĕсене пурнăçласа кăтартма тăрăшаççĕ. Зодиакăн тĕрлĕ паллинче çуралнисене кăçал юратура мĕн кĕтет-ха?**

**Сурăх** паллин тапхăрĕнче çуралнисемшĕн çулталăк ăнăçлă иртĕ. Уйрăмах çемье чăмăртама тĕв тăвакансемшĕн. Пĕчченнисем чун варлине тĕл пулĕç. Тен, мăшăрлану керменне кăçалах çул тытĕç? Çавăнпа зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çут тĕнчене килнисен пуç усма кирлĕ мар, пӳрни хапха умне килессе шанмалла. Хăшĕ-пĕри ĕлĕкхи савнипе тĕл пулу шырĕ. Çăлтăрсем ун патне таврăнни телей кӳмессине пĕлтереççĕ, аса илӳ çăмхи пуçа самантлăха çавăрттарма пултарать. Çавăнпа шăнкăравличчен тĕплĕ шухăшлăр.

**Вăкăрсене** те çĕнĕ паллашусем кĕтеççĕ. Тусăра тӳрех тĕрлĕ ыйту ан парăр, унăн мĕн пур вăрттăнлăхне пурăна киле пĕлетĕр. Çак тапхăртах çемье чăмăртасси пирки те ан шухăшлăр, паянхи кунпа савăнса пурăнăр. Мăшăрланнисене çăлтăрсем пушă вăхăта юратнă çынпа ирттерме сĕнеççĕ.

**Йĕкĕрешсене** çулталăк пуçламăшĕнчех улшăнусем кĕтеççĕ. Пĕрисем савнă çынран уйрăлаççĕ, теприсем ЗАГСа каяççĕ, виççĕмĕшĕсем йыш хушма шухăшлаççĕ. Пĕччённисен кăçал çуркунне савни тупас шанчăк пысăк. Пĕр-пĕр йышăну тунă чухне хушнине итлĕр.

Пĕлтĕр **Раксем** юратнă çынпа тăтăшах харкашнă тăк çăлтăрсем Лаша çулĕнче çакнашкал самант нумайланасси пирки систереççĕ. Хутшăнусене лайăхлатас тесен пĕр-пĕрне ăнланма вĕренĕр, çынна ан тиркĕр. Савнисĕр Раксен те чи малтан хăйсен улшăнмалла, унсăрăн чĕре юратупа хĕмленмĕ.

**Арăслансене** çăлтăрсем пуринпе те чуна уçса калаçма хушмаççĕ. Хĕрпе каччăлла çӳреме васкамалла мар. Малтан сăнамалла, пĕр-пĕрне хăнăхмалла. Мăшăрланнисем Лаша çулĕнче туйăмсем сивĕннине сисĕç. Хăшĕпĕри хăйне пачах килĕшмен çынпа пурăннине ăнланĕ. Çиччĕ виçмесĕр ан касăр. Тен, ку вăхăтлăх çеç?

**Хĕрсене** ку çул юратура ăнĕ. Çак тапхăрта çуралнисене çĕнĕ паллашусем, парнесем кĕтеççĕ. Мăшăрланманнисем чун савнине тĕл пулĕç. Юратнă çын вырăнĕнче пĕлĕшĕр те пулаять, çавăнпа тĕрĕс йышăну тăвăр.

Çемье чăмăртаман **Тарасасен** кăçал çак утăма тума шăпах меллĕ вăхăт. Лаша çулĕнче пĕрпĕрне юратакансен туйăмĕсем çирĕпленĕç. Вĕсем йыш хушасси пирки те шухăшлĕç. «Çĕнĕ кайăк» сире савăнăç кӳрĕ. Çемьеленме хатĕр Тарасасем чун варлине тĕл пулĕç. Мăшăрлану керменне кайма ĕмĕтленменнисене те вун-вун паллашу кĕтĕ, анчах пĕри те юратуллă хутшăнупа вĕçленмĕ.

**Скорпионсен** пурнăçĕ Лаша çулĕнче юратупа тулĕ, çавăнпа савнине тĕплĕн суйлăр. Пурнăç тума юрăхлине куçран вĕçертес хăрушлăх пур. Мăшăрланнисен хăйсене лăпкă тытмалла. Тавлашупа хирĕçӳ çемьене аркатма пултараççĕ. Пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшăр.

**Ухăçăсен** 2014 çулта савăнмалли сăлтав чылай пулĕ. Çулталăк пуçламăшĕнче савни парнесемпе кăмăлăра çĕклĕ е мăшăрлану керменне кайма чĕнĕ. Анчах çăлтăрсем пуçа каçăртма сĕнмеççĕ, кĕвĕçӳ лайăххи патне илсе çитермесси çинчен аса илтереççĕ. Пĕччен Ухăçăсене çуркунне ăнĕ.

**Ту качакисемшĕн** савни суйламашкăн меллĕ вăхăт çитрĕ. Лаша çулталăкĕнче туй тунисен çемйи çирĕп пулĕ. Мăшăрланнисем пушă вăхăта юратнă çынсемпе, ачасемпе ирттерме тăрăшĕç. Çакă çемьери тăнăçлăхпа юратăва сыхласа хăварма пулăшĕ.

**Шыв тăкансем** 2014 çулта пĕлĕшсен хушшинче хăйсене ирĕклĕ тытĕç, çавăнпа ĕçтешĕсем вĕсем çине куç айăн пăхĕç. Мăшăрланманнисем çуркунне турă çырнине тĕл пулĕç. Хăшĕпĕри ĕçтеше куç хывĕ. Пуçлăхпа явăçса кайнисене юратура çеç мар, ĕçре те ăнĕ.

**Пулăсене** юрату гороскопĕ савнине мĕнле пур çапла йышăнма хистет. Унăн çитменлĕхĕсене асăрхаманни каярахпа ура хурĕ. Çуркунне пуçламăшĕнче Пулăсене ытларах ăнать, çавăнпа килте ан ларăр, тухса çӳреме тăрăшăр.

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

**Хисеплĕ редакци! Сире Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп! Лаша çулĕнче пĕтĕм ырлăха сунатăп. Тен, мана та çитес вăхăтра ăнĕ? Хусаххăн пурăнма мĕн тери йывăр. Çавăнпа эпĕ «Çамрăксен хаçатне» шанатăп, ун урлă турă çырнине тупасчĕ. Эпĕ 36 çулта. Укçа-тенкĕ енчен йывăрлăх çук. Çак номерсемпе – 89063894107, 89373814108 – шăнкăравласамăр. Валерий.**

***

**Эпĕ Николай ятлă, 45 çулта. Авланман, ялта пурăнатăп. Эпĕ 30-40 çулсенчи ырă кăмăллă, шӳтлеме-пуплеме юратакан хĕр-хĕрарăмпа паллашасшăн, унпа пурнăç çулне çыхăнтарасшăн. Ача пурри чăрмантармасть. Телефон номерĕ: 89061368420.**

***

**Ялта пурăнма килĕшекен 22-28 çулсенчи хĕрпе паллашасшăн. Шăнкăравласамăр: 89279981939. Эпĕ пĕрре те авланман, пирус туртмастăп, Игорь ятлă, 28 çулта.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Ĕмĕтĕме çил-тăман вĕçтерчĕ

Хĕл кунĕсене ачаранах юратмастăп. Аттепе анне ман валли çунашка та, йĕлтĕр те, коньки те туяннă. Эпĕ вара урама тухмастăм. Ачасем юрпа вылянине, çырманалла ярăннине кантăкран пăхса ларattăм. Сивĕ çанталăка юратманни çитĕнсен те ура хучĕ. Аслă класра вĕреннĕ чухне пĕр каччă куç хыврĕ. Канмалли кунсенче клуба тухмасан вăл кил умне çитсе тăратчĕ. Ун чухне хальхи пек кашнин кĕсье телефонĕ пулман, йĕкĕтсем хĕрсене шăхăрса чĕннĕ. Атте урама кăларасшăн марччĕ, çавăнпа кашнинчех тĕрлĕ сăлтав шырама тиветчĕ.

Пĕррехинче çывăх çыннăм киле ӳсĕр таврăннă. Урамра хĕллеччĕ. Эпĕ килте çуккине пĕлсен вăл хытах тарăхнă. Ăшă çипуç тăхăнмасăрах мана шырама тухнă. Пӳртри кашни чӳречерен çутă ялкăшнине курсан Генăпа сыв пуллашмасăрах киле васкарăм. Анне макăрать, йăмăкпа шăллăм хăранипе кăмака хыçне пытаннă. Эпĕ хамăн айăпа туйнăран тӳрех çывăх çыннăм çумне лартăм, аннерен каçару ыйтрăм. Вăл мана çупăрларĕ те: «Тăхăн, аçуна шырама каятпăр», – терĕ. Çав каç эпĕ хытă шăнтăм. Урасем туйми пулса тукмак пек хытрĕç. Анне хыççăн аран ĕлкĕрсе пытăм. «Çил-тăман алхаснă кун ырă çын хăйĕн йыттине те урама кăлармасть», – теççĕ халăхра. Аттене хупахра тупрăмăр. «Çуттине» самаях ĕçнĕскер эпĕ унран ыйтмасăр урама тухни пирки те маннă. Киле çитсен тӳрех çывăрса кайрĕ. Эпир вара аннепе çурта çутинче чылайччен калаçса лартăмăр.

Аннен пурнăçĕ чăннипех те çăмăл килмен. Ачалăхĕ те йывăр иртнĕ. Аттене качча тухсан та нушине самаях курма тивнĕ унăн. Хĕллехи каçсене пĕрре мар урамра ирттернĕ вăл. Атте кăмăлĕпе лайăх çын, анчах ĕçсен пуçне çухатать. Тăвана та, пĕлĕше те палламасть. Аннене хирĕç çĕçĕпе тăни, ăна юн тухиччен хĕнени миçе пулнă-ши? Çапах çывăх çыннăм пире юратать, мана та савнă çын патне аттене систермесĕр кăларма май тупатчĕ. Каччăпа çывăхланма васкамалла марри пирки вара кашнинчех асăрхаттаратчĕ.

Гена манран виçĕ çул аслăччĕ. Шкултан вĕренсе тухсан вăл професси училищинче ăс пухма тытăнчĕ. Çав вăхăтрах ĕçлерĕ. Пĕрремĕш шалу илсен мана пысăк çемçе тетте парнелерĕ. Аттерен хăраса ăна темиçе уйăх шкапра пытарса пурăнтăм. Каçхине пурте çывăрса кайсан ăна кăларattăм та савни çинчен шухăшласа ыйха путаттăм. Ирхине каллех малтанхи вырăна хураттăм. Пĕррехинче шкултан таврăнсан манăн тетте кравать çинче выртнине курсан шалтах тĕлĕнтĕм. Ăна шкапа чикме хатĕрленнĕ хушăра пӳлĕме атте кĕрсе тăчĕ: «Мĕншĕн пытаратăн? Ку савни парни пулмалла. Çемçе тетте – ача-пăча вăййи. Эсĕ вара кĕçех шкул пĕтеретĕн, санăн вĕренесси пирки шухăшламалла», – терĕ вăл лăпкă сасăпа.

Экзаменсене ăнăçлă тытсан ăсату каçĕ иртрĕ. Çывăх çыннăмсем унта пыраймарĕç. Сăлтавĕ каллех атте эрех ĕçнипе çыхăнчĕ. Анне хăйĕн кашни шалăвĕнчен укçа хăварса мана илемлĕ кĕпе туянса пачĕ. Çынран катăк пулас мар тесе вăл атте валли те костюм илнĕччĕ. Шел те, савăнăçа пĕрле пайлаймарăмăр. Гена чечек çыххипе килчĕ. Хĕрлĕ кĕл чечексем сĕтел çинче чылай ларчĕç. Вĕсем шанманни каччă чĕринчи юрату хĕмленнине систернĕнех туйăнчĕ.

Хулари пĕр аслă шкула вĕренме кĕтĕм. Генăна çав çул салтака илсе кайрĕç. Ăсату каçне каяймарăм пулин те ăна кĕтсе илме сăмах патăм. Çулталăк хушшинче вăл ман пата темиçе çыру ячĕ. Эпĕ ют каччăсемпе хутшăнман, калаçу пуçарсан та савни пуррине нихăçан та пытарман. Гена мана улталанă иккен. Унăн тепĕр хĕр пуррине вăл юлашки çырура хăех пĕлтерчĕ. Савнийĕм теприне халалланă йĕркесене манăн адреспа ярса пачĕ. Çырăва вуланă хушăра куççуль çумăр пек шăпăртатрĕ. Юратнă çыннăн урăх савни пурри çинчен эпĕ шухăшлама та пултарайман. Вăл салтакран таврăнасса кĕтеттĕм, хамăн пурнăçа унпа çыхăнтарма ĕмĕтленеттĕм. Мĕн шухăшлани, шанни, кĕтни пĕр самантра пăчланчĕ. Генăна пуçран кăларма йывăр пулчĕ. Çывăрма выртсан та çырури сăмахсемпе тĕлĕкре аташрăм. Пĕррехинче хура çӳçлĕ хĕрпе тытăçнине курсан вăрантăм. Чунăм лăпланманнипе чиркĕве те çитсе килтĕм.

Темиçе уйăхран яла Гена таврăнни çинчен сăмах тухрĕ. Ăна яланлăхах манма тĕллев лартрăм пулин те вăл таврăнасса пур пĕрех кĕтрĕм. Каччă каçару ыйтасса, эпир хĕрпе каччăлла çӳреме пуçласса шантăм. Гена тӳрех килмерĕ. Малтан пĕр эрне ялта пурăнчĕ. Унта пĕрле вĕреннисемпе черкке çĕкленĕ. Хулана килсен вара канăвне малалла тăсрĕ. Ăна кашни каçах клубра курнине пĕлтерчĕç. Савнине тĕл пулассишĕн эпĕ те шăмат кун унта çул тытрăм. Чи капăр кĕпе тăхăнтăм, çӳçе сапаларăм. Малтан клубра çын нумаях марччĕ, çавăнпа хĕрсемпе сĕтел хушшине вырнаçрăмăр. Пĕрисем сăра ĕçрĕç, теприсем – коктейль. Эпĕ тытăнса тăтăм. Кăштахран пирĕнпе юнашар каччăсен ушкăнĕ ларчĕ. Йĕкĕтсен йышĕнче Генăна тӳрех палларăм. Вăл самаях улшăннă. Пичĕ туртăннă, ӳснĕ. Малтанах патне пыма хăю çитерееймерĕм. Хĕрсемпе пĕрле ташлама тухрăм. Черкке хыççăн черкке пушатнă хыççăн Гена мана асăрхарĕ, куç илми сăнарĕ. Эпĕ çакна сисмен пек турăм, кĕвĕ çеммине итлесе ташларăм. Тепĕртакран тахçанах кĕтнĕ, çав тери тунсăхланă каччă ытамне лекрĕм. Пĕлетĕр-и: пуçăм пĕр черкке ĕçмесĕрех çаврăнчĕ, хама юмах тĕнчине лекнĕн туйрăм. Гена мана пĕр сăмах каламасăрах чуп тыма тытăнчĕ, çӳçе ачашларĕ, хăй çумне хыттăн-хыттăн çупăрларĕ. Çапла пĕр хушă никама курмасăр кĕвĕ çеммипе ташларăмăр. Гена ултавĕ пирки аса илни «тăна кĕме» пулăшрĕ. Унăн аллине сирсе алăк патне вирхĕнтĕм. Вăл хыççăн чупрĕ, картлашка патне çитиччен мана тытса чарчĕ. Куçран тинкерчĕ те: «Каçар мана», – терĕ. Нимĕн те чĕнмерĕм. Юлташсене систермесĕрех чарăну еннелле васкарăм. Унтан таксипе киле çитрĕм. Çул тăршшĕпех хама вăрçса пытăм. Гена умĕнче «каçхи лĕпĕш» пек авкаланмалла марччĕ манăн, çилленнине ыталаса чуп туса мар, хамăн кăмăлсăрлăхпа кăтартмаллаччĕ. Эпĕ вара, туйăмсен авăрне çакланнăскер, ăна йăлтах каçарнă пек ăшшăн чуп турăм. Гена умĕнче мĕнле тӳрре тухмаллине те пĕлмерĕм. Кĕтнĕ-çке эпĕ ăна, чăнласах та юратнă. Унăн ытамне лекессишĕн мĕн чухлĕ çуннă, шкулта вĕреннĕ чухне аттерен вăрттăн ун патне тухма май тупнă. Пĕррехинче анне пӳрт умĕнчен мар, пахчаран кăларса ячĕ. Пилĕк таран юр ашса çул çине аран тухрăм. Хам йĕрес вырăнне кулатăп, тунсăхласа çитнĕскер тумтир çинчи юра силличчен Генăна ыталатăп. Нумай вăхăт курманран çăвар хупми калаçаттăм. Çав хушăра савнă çыннăма куç илми сăнаттăм. Унăн пичĕ çинчи кашни пӳрлешке вырăнне пĕлеттĕм. Çилпе кушăрханă тутине вăтана-вăтана чуп тăваттăм. Пĕрремĕш юрату ĕмĕрлĕх пулассăн туйăнатчĕ. Шел те, пурнăç тĕллевĕ улшăнчĕ. Ĕмĕтĕме те çил-тăман вĕçтерчĕ...

Киле çитсен каллех макăртăм. Хальхинче Генăна яланлăхах манма шухăшларăм, анчах чĕрене юратма пăрахмашкăн хушаймăн çав. Кунсем, çулсем иртрĕç. Эпĕ хула йĕкĕчĕпе çемье чăмăртарăм, çапах Генăна манаймарăм. Павăла ăна юратнă пек пур пĕрех саваймарăм. Паллах, мăшăра нимĕн те кăтартмастăп, ун умĕнче йăл кулатăп, яланах кăмăллăн калаçатăп. Вăл маншăн тем тума та хатĕр. Сассине хăпартмасть, килте сăлтавсăр «çил-тăвăл» çĕклемест. Тăвансем, юлташсем мана ăмсанаççĕ.

Телейлĕ-ши эпĕ? Çак ыйтăвăн хуравне хам та пĕлместĕп. Мăшăр та пур, ачасем те, анчах чуна темĕн çитмест пек. Хĕл кунĕсем çитсенех çамрăклăхăм аса килет. Çав кунсемпе çĕрсене, пĕрремĕш чун савнине нихăçан та манас çук...

**ВЕНЕРА.**



РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Ĕлĕкхи савнине шеллетĕп

XXI ĕмĕрте хĕрсемпе каччăсем тĕрлĕ çĕрте паллашаççĕ. Хĕр-упраçпа яш-кĕрĕмĕн пĕр пайĕ пĕр-пĕрне Интернетра куç хывать. Юлашки вăхăтра тĕнчене çавăрса илнĕ серепе пулăшнипе чылай çемье чăмăртанчĕ. Çакнашкал паллашу пур чухне те телейпе юрату çеç кӳмест çав. Интернет мăшăра çапăçтаракан, хирĕçтерекен сăлтав та пулаять. Пĕлĕшсем тĕрлĕ сайтра регистрациленни, унти хыпарсене сӳтсе явни пирки пĕрре мар илтнĕ. Эпĕ вара килте компьютер пулсан та Интернетра никампа та хутшăнса курманччĕ. Пĕррехинче йăмăк хистенипе социаллă сайтра хамăн сăн ӳкерчĕке вырнаçтартăм. Пĕрле вĕреннĕ юлташсем çыру çырчĕç, пурнăçăмпа кăсăкланчĕç. Ĕç хыççăн Интернета кĕресси йăлана кĕчĕ.

Çапла темиçе уйăхран мана унта ĕлĕкхи савни шыраса тупрĕ, кашни кун çыру çырчĕ. Эпĕ качча кайнине, икĕ ача амăшĕ пулнине пĕлтерсен те лăпланмарĕ, телефон номерне ярса пама ыйтрĕ. Килĕшмерĕм, çамрăк чухнехи вăхăта тавăрма çуккине ĕнентермешкĕн тăрăшрăм. Шанăça çухатманскер манăн кăмăла ăшă сăмахсем каласа çавăрма пикенчĕ. Эпĕ чиперленнине, сăнпа ним чухлĕ те улшăнманнине пĕлтерчĕ. Ыйтмасăрах хăйĕн пурнăçĕ пирки çырса кăтартрĕ. Вăл та çамрăклах авланнă иккен. Шел те, мăшăрĕпе килĕштереймен вĕсем, çулталăкранах уйрăлнă. Хайхискер хула чиперккине çие юлнине пĕлнĕрен çеç качча илнĕ. Хăй каласа кăтартнă тăрăх – ăна вăл ним чухлĕ те юратман, хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ хистенипе çеç туй тунă. Пепке те вĕсен çемйине сыхласа хăварма пулăшман. Халĕ тăвата çулти ывăлĕ амăшĕпе çитĕнет.

Пĕрре йăнăшнă хыççăн тăванĕсем ăна хисеплеме пăрахнă. 23 çулти яш эрех ĕçме тытăннă, пирус туртма вĕреннĕ, каçхи клубсене çӳренĕ. Пĕррехинче ӳсĕрле хуралçăпа тытăçнăшăн ăна темиçе кунлăха тытса хупнă. Тĕрĕссипе, вăл шкулта вĕреннĕ чухнех ĕçкелеме юрататчĕ. Пĕр çулхине юлташ хĕрĕ патĕнче Çĕнĕ çул кĕтсе илме калаçса татăлнăччĕ. Унта кашнинех хăйĕн тусĕпе е каччипе пымаллаччĕ. Эпĕ Петĕре чĕнтĕм. Вăл хаваспах килĕшрĕ. «Уява çемьепе кĕтсе илĕп те тӳрех сан патна пырăп», – терĕ. Сехет вун иккĕ шаккарĕ. Çĕнĕ çула кĕтсе илсен клуба çул тытрăмăр. Петĕр унта та çукчĕ. Тусĕсем ăна ял вĕçĕнче курнине пĕлтерчĕç. Пуçа тутăр çыхрăм та шартлама сивве пăхмасăр çавăнталла чупрăм. Хашканипе тумтире пас тытнине те туймарăм. Ял хĕрринчи пушă çурта кĕрсен тимĕр кравать çинче Петĕр выртнине куртăм. Йĕритавра тирпейсĕрлĕх хуçаланатчĕ, унта-кунта пушă кĕленче выртатчĕ. Паллах, çын пурăнман çуртра тасалăх çуккинчен тĕлĕнме кирлĕ мар, анчах Петĕр унта ӳсĕр выртни мана хытах тĕлĕнтерчĕ. Кăмăл пусăрăнчĕ, çын умне курăнас килменнипе киле кайрăм. Çакăн хыççăн унпа тĕл пулма çеç мар, хутшăнма та пăрахрăм. Петĕр темиçе хут та каçару ыйтрĕ, анчах эпĕ хирĕçлерĕм. Кун пек путсĕр каччă мана кирлĕ маррине ăнлантăм. Шкул пĕтернĕ хыççăн ăна чылай çул курман эпĕ, тĕл пулма çеç мар, ун пирки пĕр сас-хура та илтмен. Халĕ ав вăл хăй мана Интернетра шыраса тупрĕ. Паллах, унăн пурнăçĕ пирки пĕлме кăсăклă пулчĕ, анчах шелленисĕр пуçне эпĕ ăна урăх нимĕнпе те пулăшаймăп. Манăн çемье, ачасем пур. Эпĕ вĕсене питĕ юрататăп. Тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле. Вун-вун çул пĕрле пурăннă хыççăн уйрăлакан мăшăр та сахал мар-ха, çапах Петĕр кăлăхах тăрăшать. Тепĕр чухне çак тĕнчене ярса илнĕ серепе çынсене пăтратнăн туйăнать. Вăл хăшĕпĕрин чĕринче ăмсану, кĕвĕçӳ çуратать, теприсене йăнăш çулпа чупма хĕтĕртет...

**АНАСТАСИЯ.**

наркăмăш



Валентина ЭЛИМЕ

# Ватă çын куççулĕ

Юрату историйĕ

Сăвă альбомне уçрăм та юрату историйĕ çинчен сочинени çырма хатĕрлентĕм.

– Юрату. Вĕри туйăм. Нарспипе Сетнер, – сасăпах калаçрăм.

Шкулта юрату пирки шухăшласа çырма хушрĕç. Çак туйăм çинчен нимĕн те пĕлместĕп пулсан мĕн çырмалла-ха манăн? Вун пĕрмĕш класра вĕренетĕп, çапах юрату авăрне лексе курман-ха, пĕрле вĕренекен хĕрсем пек каччăпа та çӳремен. Урама тухмасăр килте ларакан хĕр тесе те калаймăн. Хăш-пĕр чухне аттепе анне мана кунĕпе те кураймаççĕ. Каçхине урама тухсан ир енне çеç киле кĕни те пĕрре мар пулнă, анчах хальччен пĕр каччă та мана киле ăсатса курман. «Юратман çынпа ан чуп ту. Ĕмĕр тăршшĕпе пĕр çынна çеç чуп тума ирĕк пар. Санăн турру – çав çын», – сасăпах вуларăм тетрадьри йĕркесене.

– Тĕрĕс çырнă, – сăмах хушрĕ тем хушăра пӳрте кĕнĕ асанне. – Савнă çынна çеç чуп тумалла, вăл пĕртен пĕрре пултăр.

– Асанне, эсир асаттепе мĕнле паллашнă? – ватă çын манпа калаçнăшăн савăнтăм. Мана яланах пулăшма, чунне пама хатĕр асанне юнашар ларчĕ.

– Качча кайма вăхăт çитнĕ пулсан та юрату мĕнне пĕлместĕн, – кушăрханă аллипе пуçран шăлчĕ вăл. – Кун пек сана кам ывăлĕ пăхтăр?

– Качча кайма иртерех-ха. Ман пек арçурие никам та кин тăвас çук, – хуравларăм эпĕ.

– Эх, апăрша. Итле апла, – çемçе пукан çине меллĕн вырнаçрĕ асанне.

Эпĕ хальччен пĕрре мар илтнĕ сăмахсене ăса хывма хатĕрлентĕм. Вĕсем ачаш та асамлă туйăмсем çуратаççĕ. Татах та татах итлес килет.

– Çав кун та ытти чухнехи пекех çут çанталăкпа киленме васкарăм, – хăйĕн сăмахне пуçларĕ асанне. – Çĕлен пек авкаланса юхакан шыв хĕрринчи пахчана кĕтĕм. Хама анне ытамне лекнĕ пекех туйрăм. Чи çывăх юлташăмпа, юратнă çынпа е кампа та пулин урăххипе кăшт урлă пулсанах çавăнта çул тытаттăм. Ытларах – савнă çыннăм аякра чухне. Эсир, вун ултă-вун сакăр çулти яш-хĕр, юрату мĕнне пĕлместĕр тесе ан калăр. Çынсем вун улттăра та, çирĕм улттăра та, хĕрĕх улттăра та юратма пултараççĕ. Юрату вăл кашниншĕн пĕр. Савман çын тĕнчере çук. Пирĕнтен аслăраххисем: «Юратăвăн вĕри хĕлхемне туйма пĕлместĕр», – тетчĕç. Йăнăшаççĕ. Хальхи вăхăтра юрату сăмахне ача садĕнче те илтме пулать. Аслисем вĕрентеççĕ. Тĕрĕс-и ку? Пиçсе çитмен çăкăра кăмакаран вăхăтсăр кăларнă пекех çакă. Юрату... Унăн авăрне кĕрсе ӳкнине туймасăрах юлтăм. Кĕркуннеччĕ ун чухне. Пылчăклă-çумăрлă вăхăтра паллашрăмăр. Ку вара юрату çуркунне çеç тыткăнлать тенине хирĕçлет. Унăн вăхăчĕ çук. Эпĕ, аннесĕр юлнă тăлăх чун, пĕчченлĕхре юлас шухăшпа урама тухаттăм. Пĕррехинче çумăр майĕпен çеç пĕрĕхетчĕ пулин те çан-çурăма самаях витерчĕ.

– Çумăр айĕнче нумай çӳресен шăнса пăсăлма та пултаратăн, – шарт сиктерчĕ çурăм хыçĕнчи сасă.

– Пур пĕрех санăн йăмăку мар. Ют çыншăн мĕн кулянмалли пур? – сăмах хушакан каччă пулнине кура калаçас килмерĕ, тӳрккессĕн хуравларăм.

– Йăнăшатăн. Кашни çын, тăшману пулсан та, пăшăрханать. Эсĕ пĕр сăмах çеç чĕнни теприне, тен, кунĕпе ĕçлемелĕх вăй-хал кĕртет, – вăл калаçни илемлĕ кĕвĕ пек илтĕнчĕ. – Çулран айккинелле пăрăнакан сукмакпа утрăм. Сăнне те лайăх курмарăм, çурăмĕ çеç куç умĕнчен каймарĕ. Сăмахсем пуçран тухмарĕç. «Эх, ятне те ыйтмарăм-çке», – пăшăрхантăм çав кун. Хама кунĕпех çăмăл туйрăм. Килти ĕçсене, малтанхипе танлаштарсан, виçĕ хут хăвăртрах турăм. Тепрехинче урама тухас мар тенĕ çĕртенех чун унта туртрĕ. Çулпа утнă май улăм пĕрчи йăтнă кăтка сăнарăм. Шухăшсен сăнчăрне каллех çурăм хыçĕнчи сасă татрĕ.

– Пĕччен çӳрени усăллă, çапах çывăх çынсем пирки манмалла мар, – йăл кулса ман çине пăхрĕ палламан каччă. Тинех ăна сăнарăм. Куççем тĕл пулчĕç. Янкăр таптаса, тĕпсĕр тӳпе пек кăн-кăвак куç. Вăтаннăран пуçа пĕкрĕм. Çав кун паллашрăмăр.

Унтанпа нумай çул иртрĕ. Хулари институт çулне иккĕн такăрлатрăмăр. Яланах пĕрле пулма тăрăшаттăмăр. Пĕр-пĕрне юратнине пĕлтермен, анчах иксĕмĕр те хĕлхем вутланнине туяттăмăр. Аслă шкултан вĕренсе тухсан ăна урăх хулана ĕçлеме ячĕç. Виçĕ çуллăха уйрăлма тиврĕ. Çав вăхăтра пĕрре те тĕл пулаймарăмăр, пĕр-пĕрин патне çыру çыраттăмăр çеç. Вăл таврăнсан мана хăйĕн мăшăрĕ пулма ыйтрĕ. Пĕрлешрĕмĕр. Кĕвĕçӳ туйăмĕ пирĕн хушăра нихăçан та пулман. Каççерен кая юлса таврăнсан тинке тухиччен ыйтусем парса канăçсăрлантарман, хăй пĕтĕмпех каласа паратчĕ. Эпĕ те унран нимĕн те пытарман. Юлташĕсен шучĕ çукчĕ. Ăна вĕсемпе вăхăт ирттерме чарман, анчах вăл унта нумай тăмастчĕ, киле хăвăрт таврăнатчĕ. Унăн час-часах аякка кайма тивнĕрен килте пĕччен юлмаллаччĕ. Йывăрччĕ. Вăл тутă-и, типĕ çи-пуçпа-и – пăшăрханаттăм. Уйрăлуран йывăрри нимĕн те çук. Пĕрле тĕрлĕ йывăрлăхран тухма çăмăлрах. Çын сăмахне итлемелле мар. «Çын çăварĕ хапха мар», – тесе ахальтен каламан. Ун пирки мана темĕн те пĕлтеретчĕç. Ĕненместĕм. Çак сăмахсем пирки пĕрле шухăшлаттăмăр. Чи кирли – пĕр-пĕрне шанни. Юратăва çакă çеç вăй парса, упраса хăварма пултарать. Эпир хирĕçсе курман, ăнланман вăхăт сиксе тухсан чуна уçаттăмăр. Йывăр ыйтусен хуравĕсем хăйсемех тупăнатчĕç.

Хальхи çамрăксене ăнланма çук, пĕрремĕш каçхинех чуп тăваççĕ, иккĕмĕшĕнче юратнине ĕнентереççĕ. Ытларах халĕ çын сăнĕпе, укçа-тенкĕпе интересленеççĕ. Пĕр-пĕрне ăнланса, шанса пурăнсан, йывăр вăхăтра вăй-хал парсан пĕтĕм ĕç кал-кал пулĕ. Хăш-пĕр хĕр хитре пулманшăн кулянать. Илеме сăнра мар, чунра шырамалла. Ыттисене çын вырăнне хумалла, çемьере «эпĕ» тени çеç пулсан вăл часах арканать. Яланах «эпир» пулмалла – савăнăçра, хурлăхра, телейре, йывăрлăхра... Юрату икĕ çын хушшинче çеç пулмалла. Юратура иккĕн вăйлă тăк ĕçре те çаплах пулĕ, – асанне хăйĕн сăмахне houkarĕ те мана пуçран ачашласа тĕпелелле иртрĕ. – Санпа калаçса ларса нимĕн те туса ĕлкĕреймĕн. Аçупа аннӳ те ĕçрен таврăнĕç, аслаçу та çитет ĕнтĕ, апат пĕçерес, – илтĕнчĕ унăн сасси. Асанне каласа пĕтерчĕ çеç – алăк уçăлчĕ. Пӳрте асатте кĕрсе тăчĕ.

– Эсĕ çылăхсăр. Тин кăна сана аса илтĕмĕр, – йăл кулса пăхрăм мана яланах ăса вĕрентекен халапсем каласа паракан асатте çине.

– Хальхинче мĕн суйрĕ-ха асаннӳ? – юриех шăппăн ыйтрĕ вăл.

– Илтетĕп эпĕ, пĕтĕмпех илтетĕп. Санпа мĕнле тĕл пулни пирки каласа кăтартрăм, – асанне тĕпелтен тухса мăшăрне хывăнма пулăшрĕ, кăвакарнă çӳçне якатрĕ.

– Юрату пирки юмах юптартăн апла.

– Эх, санпа, – алă сулчĕ асанне, тĕпеле кĕрсе курăнми пулчĕ.

Асатте ман çине пăхса телейлĕн йăл кулчĕ, мăшăрĕ хыççăн кăмака умне иртрĕ. Эпĕ вара сочинени çырмаллине мантăм, каллех шухăшсен авăрне путрăм. Шухăшсен сăнчăрне хальхинче асатте татрĕ.

– Сана тĕрĕссине калама вăхăт çитрĕ ахăртнех. Асаннӳ те тĕрĕссинех каланă-ха, анчах пĕр пулăма сиктерсе хăварнă, – пуçран ачашласа юнашар ларчĕ вăл. – Пурнăçра темĕн те пулать. Лайăххине шаннă чухнех çил-тăвăл алхасма пултарать.

– Мĕн пирки эсĕ, асатте?

– Эсĕ ан тĕпĕртет, итле ватă çынна...

...Урăх хулана виçĕ çуллăха кайсан уйăхранах пĕр хĕрпе паллашрăм. Çумăр çунă каç киле ăсатрăм. Сунчăксăр, çӳхе кĕпе çеç тăхăннă хĕре шеллерĕм. Кайран калаçса кайрăмăр, вăхăт иртсен хам та сисмерĕм – ăна килĕштернине туйрăм. Хăраса кайрăм: манăн ялта Лена пур-çке! Тĕл пулусене каймарăм, пĕтĕмпех ĕç çине йăвантартăм. Вăл мана çав-çавах шыраса тупатчĕ. Кайран Верăран тарса çӳреме пăрахрăм. Лена патне çыру яраттăм, анчах Вера пирки пĕрре те çырман. Çур çултан Вера çие юлнине пĕлтерчĕ. Вăл варта тĕвĕленнĕ пепкене çуратасшăн марччĕ, анчах хырăм пăрахтармарăм. Ывăл çуралчĕ, Миша ят хутăмăр.

– Асатте, вара вăл...

– Эсĕ малалла итле, – асатте шĕвĕр пӳрнипе юнарĕ те сăмахне тăсрĕ. – Ача çулталăк тултарсан Верăна тем пулчĕ, каççерен кая юлса килме пуçларĕ, хăйĕнчен эрех шăрши кĕретчĕ. Манăн тăван хулана таврăнма вăхăт çитрĕ. Пĕррехинче ĕç хыççăн киле кĕрсен Миша кăшкăрса макăрнине илтрĕм. Хваттере кĕрсен вăл пĕччен пулнине куртăм. Вера та, унăн япалисем те çук. Мишăна лăплантарнă хыççăн Вера çырăвне тупрăм. Вăл пуян арçынпа кăнтăр енне тухса кайнă-мĕн, Мишăна пăрахса хăварнă. Çулталăкри ачапа пĕччен юлтăм. Икĕ эрнерен тăван тăрăха таврăнтăм. Ленăпа калаçаймарăм, хал çитмерĕ. Айăплăччĕ унăн умĕнче. Эпĕ яла ачапа таврăнни пирки вăл илтнĕ. Урамра тĕл пулсан тепĕр енне каçатчĕ. Вăхăт иртсен те сăмах хушма, каçару ыйтма хал çитерейменĕм. Çапла виçĕ çул иртрĕ. Ленăпа куçа-куçăн калаçаймарăм. Хăй те тĕл пулу шырамарĕ. Чĕрем ун патнех туртăнчĕ. Миша амăшĕ пирки ыйтма тытăнчĕ. Пĕр кунхине Миша урамра Ленăпа калаçнине куртăм. Эпĕ тухсан вăл ачапа хăвăрт сыв пуллашрĕ те васкаса утрĕ. Миша ман пата чупса пычĕ те хăйĕн чĕлхипе чĕвĕлтетме пуçларĕ.

– Лена аппа мана кучченеç пачĕ. Вăл лайăх. Ман пирки ыйтса пĕлчĕ. Сăвă каласа пачĕ, мана та вĕрентĕп терĕ. Атте, мĕншĕн вăл пирĕн пата хăнана килмест? Мана вăл питĕ килĕшет.

Эпĕ мĕн хуравламаллине пĕлмерĕм. Чĕре çеç çĕçĕпе чикнĕн ыратрĕ. Кĕркунне çитрĕ. Лена манпа пĕр сăмах та калаçмарĕ. Мишăпа вара час-часах тĕл пулчĕ. Ун патне садике те пыратчĕ. Мĕншĕн? Ăнланмарăм. Пĕр каçхине ĕçрен кая юлса таврăнтăм. Чун темшĕн пăшăрханчĕ. Урампа пынă чухне васкавлă медпулăшу машинине курах кайрăм. Пирĕн кил умĕнче. Çитсе ĕлкĕреймерĕм – машина тапранса кайрĕ. Кил картишне кĕрсен Мишăна чĕнтĕм. Анне çеç сасă пачĕ.

– Миша чутах пĕвене анса каятчĕ. Сана кĕтсе илеймерĕ те урама тухрĕ. Юрать, Миша путма пуçланине Лена лавккаран таврăннă чухне асăрханă, унсăрăн инкек курăттăмăр, – куççульне шăлчĕ анне. Эпĕ район больницине вĕçтертĕм. Тавах турра, Миша ура çинче. Лена та пĕр эрнерен киле таврăнчĕ. Пĕр каçхине эпĕ ĕçрен таврăннине вăл мана хапха умĕнче кĕтсе тăнă. Мана темĕн тыттарчĕ те çаврăнса утрĕ. Хăваласа çитрĕм. Чунра капланнине пĕтĕмпех каларăм. Лена куçран пăхрĕ, унтан ыталарĕ те макăрчĕ. Чĕркуçленсе каçару ыйтрăм.

– Эпĕ сана тахçанах каçарнă, – пулчĕ хурав. Икĕ уйăхран пĕрлешрĕмĕр. Миша Ленăран хăпма пĕлместчĕ. Хăш-пĕр тăван амăшĕ те хăйĕн ачине Лена Мишăна юратнă пек пăхас çук. Эпĕ пӳрт тулли ача-пăча пирки ĕмĕтленеттĕм. Кун пирки Ленăна пĕлтертĕм. Вăл питне икĕ аллипе хупларĕ те макăрса ячĕ. Кăшт лăплансан унăн ача пулмассине пĕлтерчĕ. Мишăна çăлнă каç уншăн синкерлĕ пулнă.

– Кун пирки тӳрех пĕлтерменшĕн каçар. Уйрăласшăн тăк – чармастăп.

– Мĕн калаçатăн эсĕ, Лена?! Манăн эсĕ пур, Миша. Сана вăл амăшĕ вырăннех хурать. Кун пек шухăш текех ан пултăр!

Унтанпа кун пирки сăмах пуçармарăмăр. Лена ача çуратайманшăн хама айăплă туятăп...

Асатте шăпланчĕ, алă тупанĕпе питне вăрттăн шăлчĕ. Ватă çын пит çăмарти тăрăх куççуль юхнине пĕрремĕш хут куртăм. Нимĕн те калаймарăм. Асатте калани пĕрре тĕлĕнтерчĕ, тепре чĕрене тиврĕ. Арçын макăрнине нихăçан та курман. Тахçанхи ырату асаттене халĕ те суран евĕр асаплантарать. Акă вăл – чăнчăн юрату! Куç умне тантăш хĕрсем савнишĕн макăрни, пĕр-пĕринпе клубра хирĕçни тухса тăчĕ.

– Ăслă пул, хĕрĕм. Пурнăçра та, вĕренӳре те тĕплĕ пул, – асатте мана пуçран ачашларĕ те асанне патне тĕпеле иртрĕ. Пуçра пин тĕрлĕ шухăш явăнчĕ. Юратура пĕр-пĕрне ăнланнисĕр пуçне каçарма пĕлни те кирлĕ иккен. Кашни вак-тĕвекшĕн тута тăсни, алăка шалт хупни юратăва çирĕплетмест. Çынна каçарма питĕ йывăр, çапах...

Шухăшсен авăрне алăк сасси татрĕ. Аттепе анне ĕçрен таврăнчĕç. Асанне вĕсене ăшшăн кĕтсе илчĕ, аттене питĕнчен ачашшăн сĕртĕнчĕ. Хĕрарăм çын ачине тăван пекех юратать. Хăй çуратайманшăн чунĕ ыратать те пулĕ, анчах ывăлĕ сывă пулни ăна вăй парать, савăнăçпа телей парнелет. Асаннене ыталарăм.

– Эсĕ, мĕн, урок тумастăн? Кушак çури пек ачашланатăн кунта, – вăрçнă пек турĕ асанне.

Сочинение малалла çырас тесе пӳлĕме кĕрсе сĕтел хушшине вырнаçрăм. Юратăва туйса курман пулин те ватă çын куççулĕ унăн вăйне сăмахсăрах ĕнентерчĕ.




ИЛЕМ САЛОНĔ

# Лимонран

**Лимон иммунитета çирĕплетет. Ку кăна мар, унран лосьон та хатĕрлеме пулать.**

**Хура пўрлешкесене тасатмалли лосьон.** Тин юхтарнă сĕткене глицеринпа 1:1 шайлашура хутăштармалла. Унра мамăка йĕпетмелле, кирлĕ вырăна сăтăрмалла – анчах эрнере 2 хутран ытла мар.

**Çуллă ўт валли.** 1 лимон, 100 грамм эрех, 1 апат кашăкĕ шыв, 1 чей кашăкĕ глицерин илмелле. Лимона хуппипе пĕрле теркăпа хырмалла, шурă эрех ямалла. Хутăша тĕттĕм вырăна 1 эрнелĕхе лартмалла. Унтан шыв, глицерин хушмалла. Шĕвекпе пите куллен сăтăрмалла – ўт çемçелĕ, çуталĕ.

**Ватăлакан ўт валли.** Лимон сĕткенĕпе олива çăвне пĕр пек шайлашура илмелле, пăтратмалла. Çак хутăшпа ўте кунне 2 хут сăтăрмалла – пĕркеленчĕксем яканĕç.

**Пўрлешкесенчен.** Хăяр, кишĕр, лимон сĕткенĕсене пĕр пек шайлашура илсе пăтратмалла. Шĕвекпе ўте кунне 2 хут сăтăрмалла. Анчах ас тăвăр: ăна пĕрре усă курмалăх çеç хатĕрлемелле.

**Ўте çамрăклатмашкăн.** 1 стакан лимон сĕткенĕ, 50 миллилитр коньяк, 200 грамм хăйма /сливки/, çăмартан 1 сарри кирлĕ. Вĕсене пĕр савăта ярса пăтратмалла, хутăша сивĕтмĕшре упрамалла. Шĕвеке ўте ирхине тата каçхине сĕрмелле.

АСРА ТЫТМА

# Мунчара, саунăра...

**Мунча кĕме, саунăна çўреме кăмăллатăр-и? Унта хĕлле, сивĕ çанталăкра, рехетленме уйрăмах аван, анчах хăш-пĕр сĕнĕве асра тытăр.**

✓Саунăна кайнă чухне халатпа тапочка илме манмалла мар. Ку гигиена тĕлĕшĕнчен лайăх. Калпак та питĕ кирлĕ. «Ахаль те вĕри пўлĕмре калпак мĕн тума кирлĕ?» – ыйтĕ хăшĕ-пĕри. Шăпах вăл пуçа, çўçе вĕри сывлăшран хўтĕлет. Ятарлă калпак çук тăк ахальли те каять. Вăл пуçри температурăна кирлĕ шайра тытма май парать. Эппин, пуç мимипе юн тымарĕсене йывăр килмĕ.

✓Мунчана, саунăна кайнă чухне шампуньпе супăнь, мунчала çеç ан илĕр. Скраб та питĕ кирлĕ. Çемçелнĕ ўте унпа сăтăрни вилнĕ клеткăсенчен хăтăлма, тар шăтăкĕсене лайăх тасатма май парать. Саунăпа мунча – СПА процедурăсене тумалли лайăх вырăнсем.

✓Мунча хыççăн та ўт пирки манмалла мар. Эппин, ўте нўрлентерекен лосьон е крем кирлĕ. Мунчара, саунăра ўт клеткисем шыв нумай тăкаклаççĕ, çавна май ўт кушăрхама пултарать.

✓Саунăна е мунчана кайма хатĕрленсен пĕрле шыв е курăк чейĕ илме ан манăр. Вĕсем организма шывпа тивĕçтерме пулăшаççĕ. Чи кирли – шĕвеке пĕчĕк сыпкăмсемпе ĕçни.

✓Сауна е мунча кĕнин усси пысăк пултăр тесен хăвăра каякан эфир çăвĕ суйламалла. Вăл организма кантарать, иммунитета çирĕплетет, тонуса хăпартать. Анчах асăрханăр: ароматçусенче искусственнăй япаласем ан пулчăр. Вĕсем организма лексе сиен çеç кўреççĕ.



◆ ТУТЛĂ ПĔÇЕРЕР-И?

## "Пике" салат

**Чăхăн 300 грамм тачка ашĕ, 150 грамм хăяр, консервланă пăрçа – 150 грамм, çавăн чухлех хăйма, укроп, тăвар кирлĕ.**

Какая 20 минут вĕретмелле, сивĕтмелле. Хăяра – тăваткал, укропа вĕтĕ турамалла. Какая та тăваткал касмалла. Çимĕçсене савăта ярса тăвар сапмалла, хăймапа пăтратмалла.

## Тăпăрчăран – ролл

**200 грамм тăпăрчă, 2 апат кашăкĕ хăйма, 1 чей кашăкĕ пыл, хура 7-8 слива, исĕм çырли, кокос çункавĕ, кунжут, йўçĕ шăккалат – 10 грамм, 8-10 миндаль /е урăх мăйăр/ кирлĕ.**

Тăпăрча пылпа, хăймапа пăтратмалла, хура сливăна вĕтĕ турамалла. Ятарлă хутаç çине кокос çункавĕ, кунжут сапмалла. Унтан тăпăрчă хумалла, çĕçĕпе якатмалла. Ун çине хура слива, исĕм çырли вырнаçтармалла. Хутаçăн пĕр кĕтесне çĕклесе çавăрттармалла. Ăна сивĕтмĕше 30-40 минутлăха лартмалла. Çавăрмăша сĕтел çине лартиччен ролл евĕр касмалла, ирĕлтернĕ шăккалат сапмалла, миндальпе илемлетмелле.

## Банан çавăрмăшĕ

**Чуста валли 6 çăмарта, сахăр, 3 апат кашăкĕ какао, çур чей кашăкĕ апат соди кирлĕ. Ăшне тумашкăн 200 миллилитр сĕт, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 250 грамм услам çу, 1 çăмарта, ванилин, 2 апат кашăкĕ какао, 4 апат кашăкĕ сахăр çăнăхĕ, 2 банан илмелле.**

Çăмарта саррине шурринчен уйăрмалла, иккĕмĕшне кăпăшкалантармалла. Саррине сахăрпа хутăштарса лайăх лăкамалла, какао, апат соди ямалла, çăмарта шуррине асăрханса хушмалла. Противене çу сĕрмелле, ятарлă хут сармалла, чустана ун çине хумалла. Ăна 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 7-10 минут пĕçермелле. Пиçнĕ икерче нўрĕ ал шăлли çине хумалла, çавăрттармалла. Сивĕнсен каялла сўтмелле, хута илмелле. Сĕтпе çăнăха çулăм çине лартмалла, çăраличчен тытмалла. Çулăм çинчен илсен çăмарта хушмалла, сивĕтмелле. Кăшт ирĕлнĕ çăва сĕт хутăшне ямалла, ăна икĕ пая уйăрмалла – 60/40. Пысăкрах пайне сахăр çăнăхĕпе хутăштарса какао хушмалла, пĕчĕкрех пайне – ванилин. Шăккалат кремĕн çуррине илемлетмешкĕн хăвармалла. Икерчĕ çине шăккалатпа ванилин кремне çурмалла сĕрмелле, çавăрттармалла, унтан юлнă шăккалатлă кремпа илемлетмелле, çиелтен какао-порошок сапмалла. Сĕтел çине лартиччен ăна сивĕтмĕшре кăштах тытмалла.

ХАЛĂХ МЕЛĔПЕ

# Чир сарăлнă вăхăт

**Грипп сарăлма тытăнчĕ. Манăн питĕ чирлес килмест. Прививка туман. Пĕлетĕп: гриппа, ОРВИпе чирлес мар тесен иммунитета çирĕплетмелле. Куллен ыхра, сухан çиме тăрăшатăп-ха. Ахăртнех, ку çителĕксĕр. Иммунитета çирĕплетмелли эмелсене телевизорпа кунĕн-çĕрĕн çавăрттараççĕ-ха, анчах манăн халăх мелĕсемпе усă курас килет. Пулăшăр, тархасшăн.**

**Лиана В.**
Красноармейски районĕ.

Грипп сарăлнă вăхăтра кашни кун ыхра, сухан çисе тĕрĕс тăватăр. Ку вируссене пĕтерет, иммунитета çирĕплетет. Паллах, урăх мелсем те пур.

1 стакан тасатман сĕлле, 2 апат кашăкĕ шăлан çырлине, 1,5 литр вĕри шыва термоса ярса лартмалла. Усăллă çак шĕвеке çуршар стакан кунне 2-3 хут ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 1 уйăх, унтан кăштах канмалла. Шăлан çырли вырăнне типĕтнĕ улма-çырла яма юрать. Килте кавăн пур-и? 300-400 грамм çемçе пайне шултра теркăпа хырмалла, 300 грамм пыл хушмалла, 2-3 лимонран хатĕрленĕ пăтта /аш арманĕпе хуппипе пĕрле авăртмалла/ ямалла. Хутăша сивĕтмĕшре упрамалла, ăна ирхине выçă хырăмла 1 апат кашăкĕ çимелле. Хĕрлĕ пилеше аш арманĕпе авăртмалла, 1 апат кашăкĕ пăтă евĕр хутăша, 2 апат кашăкĕ çемçетнĕ шур çырлине, 5 апат кашăкĕ пыла, хĕрлĕ кăшманпа ыхра сĕткенĕсене /2-шер апат кашăкĕ/ пăтратмалла, унтан 2 стакан эрех ямалла. Ăна тĕттĕм вырăна 2 эрнелĕхе лартмалла. Сиплĕскере апатланас умĕн 1-ер апат кашăкĕ кунне 2-3 хут ĕçмелле, анчах 1 уйăхран кая мар. Импĕр тымарĕ усăллă. 6-8 сантиметр тăршшĕ тымара вĕтĕ теркăпа хырмалла, 1 литр вĕри шыва ямалла, хуппипе туранă лимон, пыл хушмалла. Ăна 250-шар миллилитр кунне 3 хут ĕçмелле.

ПĔЛЕТĔР-И ЭСИР?

# Тур палли кăмăла палăртать

**Кашни çыннăн тур палли пур. Хăшĕ-пĕри çирĕплетнĕ тăрăх – вăл ăçта вырнаçни пĕлтерĕшлĕ. Çапла майпа çыннăн кăмăлне пĕлме пулать-мĕн.**




1. Икĕ куç хушшинчи тур палли çын сисĕмлĕ туйăмлă пулнине кăтартать. Унăн логики вăйлă аталаннă.

2. Ку çын хĕрўллĕ, кĕвĕç пулнине кăтартать.

3. Çак вырăнта тур палли пур-и? Çын кăмăлĕ поэтăнни евĕр. Вăл ăс-тăнпа çыхăннă профессипе ĕçлеме юратать.

4. Кунашкал çын юрату авăрне пуçĕпех кĕрсе ўкме пултарать, ăна ĕмĕрне те манмасть. Вăл юратнă çыннипе яланах çепĕç.

5. Ку çын пат татса хума пултарать, унăн кăмăлĕ час улшăнать. Çакă вара юратура асаписер, кĕске çыхăнусем патне тăтăшах илсе çитерет.

6. Кун пек çын сул çўреве тухма, пултарулăх ĕçĕпе аппаланма юратать. Унăн шухăш хăвачĕ вăйлă.

7. Çак вырăнта тур палли пур тăк эсир – кĕвĕç çын.

8. Кунашкал çын час кўренет. Çемьере вăл çĕнĕ туйăмсем шырать, нумай пăшăрханать.

9. Çак çын хăйне час-часах айăплă туять, çавна май вăл тăтăшах хирĕçме пултарать.

10. Çакнашкал çын ăспа уйăрлса тăрать. Вăл пур çĕрте те хăйĕн валли тупăш тăваять.

11. Кун пек çын хăйне психологи тĕлĕшĕнчен хĕсĕк туять, «ăмсантаракан çимĕç» патне туртăнать. Ку вара юратура йывăрлăхсем кăларса тăратать.

12. Çыннăн çак вырăнта тур палли пур тăк вăл – кĕвĕç.

13. Кунашкал çын вак-тĕвекшĕн ятлаçма ăста. Анчах кун хыççăн вăл часах лăпланать.

14. Çакнашкал тур паллиллĕ çын мистикăпа кăсăкланать.

15. Ку вырăнти тур палли çын никама пăхăнма юратманнине кăтартать. Вăл пĕтĕмпех хăйĕн пек тăвать.

16. Çак çын пуçĕ-мĕнĕпе çемьене парăннă.

17. Вăл – астаруçă, хирĕçўллĕ самантсене тăтăшах лекет.

18. Тур палли сисĕмлĕ кăмăла палăртать. Çак çын шухăш хăвачĕпе уйрăлса тăрать.

19. Кун пек çын пысăк пĕртен пĕр юрату пирки ĕмĕтленет, çавăнпа вăл кĕвĕç, чăкăлтăш.

20. Çакнашкал çын депрессипе час-часах аптăрать.

21. Кун пек çын пĕр пеклĕхе юратмасть, ку юратăва та витĕм кўрет.

22. Çакнашкал тур паллиллĕ çынна ют илем илĕртет. Эппин, вăл савнине улталанинчен тĕлĕнмелле мар.

23. Вăл – ăслă, йĕркесĕрлĕхе юратмасть, çавăнпа унăн кашни япалин вырăнĕ пур.

24. Çакнашкал çын психика, сывлăх енчен хавшак. Вăл хăйне хўтлĕхре туймасть, унăн йывăрлăхсене парăнтарма вăй çук.

25. Кун пек тур паллиллĕ çын çирĕп çемье çавăрма талпăнать, лăпкă пурнăçа юратать.

**Страницăна Ирина АЛЕКСЕЕВА хатĕрленĕ.**

## КĂРЛАЧ — ЯНВАРЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 6 | 13 | 20 | 27 | ПН |
| ЫТ | | 7 | 14 | 21 | 28 | ВТ |
| ЮН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | СР |
| КҪ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ЧТ |
| ЭР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ПТ |
| ШМ | 4 | 11 | 18 | 25 | | СБ |
| ВР | 5 | 12 | 19 | 26 | | ВС |

## НАРĂС — ФЕВРАЛЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 | ПН |
| ЫТ | | 4 | 11 | 18 | 25 | ВТ |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 | СР |
| КҪ | | 6 | 13 | 20 | 27 | ЧТ |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 | ПТ |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | | СБ |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | | ВС |

## ПУШ — МАРТ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ПН |
| ЫТ | | 4 | 11 | 18 | 25 | | ВТ |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 | | СР |
| КҪ | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ЧТ |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ПТ |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | СБ |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | ВС |

## АКА — АПРЕЛЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 7 | 14 | 21 | 28 | ПН |
| ЫТ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | ВТ |
| ЮН | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | СР |
| КҪ | 3 | 10 | 17 | 24 | | ЧТ |
| ЭР | 4 | 11 | 18 | 25 | | ПТ |
| ШМ | 5 | 12 | 19 | 26 | | СБ |
| ВР | 6 | 13 | 20 | 27 | | ВС |

## ҪУ — МАЙ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 5 | 12 | 19 | 26 | ПН |
| ЫТ | | 6 | 13 | 20 | 27 | ВТ |
| ЮН | | 7 | 14 | 21 | 28 | СР |
| КҪ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | ЧТ |
| ЭР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ПТ |
| ШМ | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | СБ |
| ВР | 4 | 11 | 18 | 25 | | ВС |

## ҪĔРТМЕ — ИЮНЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ПН |
| ЫТ | | 3 | 10 | 17 | 24 | | ВТ |
| ЮН | | 4 | 11 | 18 | 25 | | СР |
| КҪ | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ЧТ |
| ЭР | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ПТ |
| ШМ | | 7 | 14 | 21 | 28 | | СБ |
| ВР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ВС |

## УТĂ — ИЮЛЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 7 | 14 | 21 | 28 | ПН |
| ЫТ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | ВТ |
| ЮН | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | СР |
| КҪ | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ЧТ |
| ЭР | 4 | 11 | 18 | 25 | | ПТ |
| ШМ | 5 | 12 | 19 | 26 | | СБ |
| ВР | 6 | 13 | 20 | 27 | | ВС |

## ҪУРЛА — АВГУСТ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 4 | 11 | 18 | 25 | ПН |
| ЫТ | | 5 | 12 | 19 | 26 | ВТ |
| ЮН | | 6 | 13 | 20 | 27 | СР |
| КҪ | | 7 | 14 | 21 | 28 | ЧТ |
| ЭР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | ПТ |
| ШМ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | СБ |
| ВР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ВС |

## АВĂН — СЕНТЯБРЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | ПН |
| ЫТ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ВТ |
| ЮН | 3 | 10 | 17 | 24 | | СР |
| КҪ | 4 | 11 | 18 | 25 | | ЧТ |
| ЭР | 5 | 12 | 19 | 26 | | ПТ |
| ШМ | 6 | 13 | 20 | 27 | | СБ |
| ВР | 7 | 14 | 21 | 28 | | ВС |

## ЮПА — ОКТЯБРЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 6 | 13 | 20 | 27 | ПН |
| ЫТ | | 7 | 14 | 21 | 28 | ВТ |
| ЮН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | СР |
| КҪ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ЧТ |
| ЭР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ПТ |
| ШМ | 4 | 11 | 18 | 25 | | СБ |
| ВР | 5 | 12 | 19 | 26 | | ВС |

## ЧӲК — НОЯБРЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 | ПН |
| ЫТ | | 4 | 11 | 18 | 25 | ВТ |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 | СР |
| КҪ | | 6 | 13 | 20 | 27 | ЧТ |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 | ПТ |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | СБ |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ВС |

## РАШТАВ — ДЕКАБРЬ

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | ПН |
| ЫТ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ВТ |
| ЮН | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | СР |
| КҪ | 4 | 11 | 18 | 25 | | ЧТ |
| ЭР | 5 | 12 | 19 | 26 | | ПТ |
| ШМ | 6 | 13 | 20 | 27 | | СБ |
| ВР | 7 | 14 | 21 | 28 | | ВС |




**“Çамрăксен хаçачĕ”**
**сирĕн килте пултăр яланах!**